27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944 МАЙ 24 ЮНКУН 102(6597) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖНЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВКП(б) Чӑваш Обкомӗнче

Ҫуракине вӗҫлемелли фронтовой вунӑкунлӑх ҫинчен

ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ майӑн 25-мӗшӗнчен пуҫласа июнӗн 5-мӗшне ҫитиччен ҫуракине вӗҫлемелли фронтовой вунӑкунлӑх ирттерме йышӑннӑ.

Парти райкомӗсене фронтовой вунӑкунлӑхӑн задачисем ҫинчен колхозниксене тӗплӗн ӑнлантарса пама, вӗсене ҫуркунне хи уйхир ӗҫӗсене хӑвӑртрах вӗҫленӗ ҫӗре тата фермӑсем ҫумӗнчи участоксене, ҫар ҫыннисен ҫемьисене пулӑшмалли фондӑн гектарӗсене тата мӗнпур усӑ курман ҫӗрсене акса, ҫуракинче акма йышӑннӑ плана ирттерсе тултарнӑ ҫӗре мобилизацилеме хушнӑ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

МАЙӐН 22-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Майӑн 22-мӗшӗнче фронтсенче паллӑ улшӑнусем пулман.

Майӑн 21-мӗшӗнче сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 17 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Тирасполь хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнелехре пирӗн чаҫсем тӑшманӑн темиҫе атакине сирсе янӑ. Ҫапӑҫусенче 300 гитлеровеца яхӑн вӗлерсе пӗтернӗ тата нимӗҫсен 3 бронетранспортерне пӗтерсе тӑкнӑ. Тыткӑна илнисем пур. Пӗр ял районӗнче Маслов старшинан танкӗ пирӗн оборонӑн малти хӗрринче засадӑра тӑнӑ. Ирхине ирех нимӗҫсем атака пуҫласа янӑ. Пирӗн танкистсем нимӗҫсен 2 танкне персе вут тивертнӗ. Тӑшманӑн ытти танкӗсем вара васкаса каялла ҫаврӑнса кайнӑ. Хӑй тӗллӗн ҫӳрекен пӗр туппи вӗсене хӳтӗлесе тӑнӑ. Ҫавӑн чухне Маслов танкӗ засадӑран тухнӑ та тӑшман туппине айккинчен пенӗ. Вара нимӗҫсем хӑйсен туппине пӑрахса тарнӑ. Пирӗн танкистсем ҫав хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппа тапкран кӑкарнӑ та хӑйсен чаҫне илсе ҫитернӗ.

* * *

Станислав хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнелехре нимӗҫсем ҫапӑҫса разведка тума хӑтланнӑ. Пирӗннисем вӗсене артиллерирен тата пӑшалсемпе, пулеметсемпе вӑйлӑн пеме тытӑннӑ, вара гитлеровецсем пирӗн оборонӑн малти хӗррине ҫитеймесӗрех каялла ҫаврӑнса кайнӑ.

Совет летчикӗсем сывлӑшри ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 2 самолетне персе ӳкернӗ. Кунсӑр пуҫне, зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 4 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Лупк хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнелехре Подобин лейтенант ертсе пыракан вунӑ разведчик тӑшман вырнаҫнӑ вырӑна кӗрсе кайнӑ. Ҫӗрле пирӗн боецсем пӗр пысӑк яла пырса кӗнӗ те, нимӗҫ фельдфебельне тыткӑна илсе, ӑна хӑйсен чаҫне илсе ҫитернӗ.

* * *

Минск облаҫӗнче кӗрешекен партизансен Сталин юлташ ячӗпе тӑракан отрячӗ пӗр уйӑх хушшинче нимӗҫсен 12 ҫар эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ. Партизансем шоссе ҫулӗсемпе ахаль ҫулсем ҫинче 19 кӗпере ҫунтарса янӑ, 11 автомашинӑна сирпӗнтернӗ. Тӑшманӑн телеграфпа телефон пралукне 82 километр тӑршшӗ касса илнӗ. Нимӗҫ оккупанчӗсемпе ҫапӑҫса тата засадӑсенчен персе, 200 гитлеровеца ытла вӗлерпӗ е амантнӑ. Партизансен «Искра» тата «Знамя» ятлӑ отрячӗсем пӗрлешсе нимӗҫсен фронт патнелле каякан ҫар эшелонне тапӑннӑ. Тӗрлӗ ҫар хатӗрӗсем тиенӗ 26 вагонпа платформӑна сунтарса янӑ.

* * *

Румынсен 3-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчен тыткӑна лекнӗ рота командирӗ Ион Матрекия капитан ҫапла каласа панӑ: «Совет ҫарӗсем Румыни территорине килсе кӗнине пула нумай румынсем Германи ҫак вӑрҫӑра аяла пулнине лайӑх ӑнланса илчӗҫ. Пирӗн батальонри офицерсем вырӑссене малашне хирӗҫ тӑни усӑсӑр ҫеҫ мар, вӑл Румынишӗн вилӗмлӗ хӑрушӑ пулса тӑрать тесе шутлаҫҫӗ. Пирӗн ҫарсем начар хӗҫпӑшалланнӑ. Румынире тупӑсем тӑвакан пӗр завод ҫеҫ пур. Анчах вӑл та тахҫантанпах ӗнтӗ нимӗҫсен аллинче, нимӗҫсем унӑн пӗтӗм продукцине хӑйсем илеҫҫӗ. 3-мӗш дивизире танксене пемелли шултӑра йышши артиллери пӗртте ҫук. Автоматлӑ хӗҫпӑшалсем питӗ сахал. Патронсем те ҫитмеҫҫӗ. Румынире чӑн хуҫа—Киллингер, вӑл Бухарестра нимӗҫсен наместникӗ пулса тӑрать. Хӑшпӗр офицерсем Антонеску ҫинчен ҫапла калаҫҫӗ: вӑл ҫав Гитлер наместникӗ патӗнче дежурнӑй офицер пулса тӑрать, теҫҫӗ. Нимӗҫсене Румынирен май килнӗ таран нефть, чӗртавар тата апат-ҫимӗҫ ытларах илсе кайма май парас тесе, Антонеску румын салтакӗсене вилӗм шӑтӑкне чикет. Анчах та халь ӗнтӗ нимӗҫсем майлӑ ҫапӑҫма килӗшмен румын салтакӗсемпе офицерӗсен хисепӗ кунсеренех ӳссе пырать.

* * *

Гитлеровецсем ҫакӑн пек пӗлтерӳ сараҫҫӗ: «Германипе Румынин Крымран илсе тухнӑ ҫарӗсене Румынин Хура тинӗс хӗрринчи хулисенче вырнаҫтарнӑ. Вӗсене хӗвелтухӑҫ фрончӗн кӑнтӑр участокне ярӗҫ».

Ҫапла килӗшӳсӗр хӑтланса, нимӗҫсем хӑйсем Крымра мӗн тери пысӑк поражени тӳснине пытарасшӑн. Вӗсем нимӗҫсемпе румынсен ҫарӗсене Крым ҫурутравӗнче аркатса тӑкни ҫинчен уҫҫӑн калама хӑраҫҫӗ. Кирек мӗн пулсан та, Крымра вӗлернӗ гитлеровецсене хваттер тавраш кирлӗ мар ӗнтӗ. Нимӗҫсемпе румынсен пирӗн ҫарсем тыткӑна илнӗ 60.000 салтакӗпе офицерӗ ытла тыткӑнрисен лагерӗсенче хваттер тупнӑ. Крым ҫурутравӗнчен тарма пултарнӑ нимӗҫсем, питӗ сахал пирки, кирек хӑш ялта та вырнаҫма пултараҫҫӗ. Совет Союзӗпе Германи фрончӗн кӑнтӑр участокӗнчи нимӗҫ генералӗсен, ҫав салтаксене хӑйсем патне илсен, ӗҫ нумай ытларах пулать. Чӗрӗ юлнӑ нимӗҫсем фашистла ҫарсене Крымра калама ҫук хӑрушӑ аркатса тӑкни ҫинчен тата нимӗҫсемпе румынсен темиҫе вунӑ пин салтакӗ пӗр чапсӑр вилсе выртни ҫинчен хыпар сарӗҫ.

Чӑваш республики 25 ҫул тултарнине кӗтсе илме хатӗрленесси

Юбилее хатӗрленес тӗлӗшпе ӗҫлекен правительство комиссийӗн ларӑвӗ

Майӑн 22-мӗшӗнче Чӑваш АСС Республикин 25 ҫул тултарассине кӗтсе илме хатӗрленес тӗлӗшпе ӗҫлекен правительство комиссийӗн ларӑвӗ пулса иртрӗ.

Ларӑва правительство комиссийӗн председателӗ — Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. А. Андреева юлташ ертсе пычӗ.

Комисси республикӑри организацисемпе предприятисем республика юбилейне хатӗрленес тӗлӗшпе тунӑ малтанхи ӗҫсене пӑхса тухрӗ. Ларура — П. Аникин (Шупашкар хула совет исполкомӗн председателӗ), А. Никитина (искусство ӗҫӗсен управлени начальникӗн заместителӗ), Г. Лисков (композиторсен Союзӗн председателӗ, халӑх пултарулӑх ҫурчӗн директорӗ), П. Григорьев (Чӑвашсен наукӑпа тӗпчев институчӗ), М. Спиридонов (художниксен Союзӗн председателӗ), Мордкович (Чӑвашсен государство академи театрӗ), П. Золотов (Чӑвашгиз), И. Тукташ (писательсен Союзӗн председателӗ), П. Тощев (госплан), П. Калинкина (Апат-ҫимӗҫ халӑх комиссарӗ) юлташсем хӑйсен организацийӗсем енӗпе мӗн тупи ҫинчен каласа пачӗҫ.

Ларура тухса каланисенчен пирӗн чылай организацисем республика юбилейне хатӗрленме тивӗҫлипе тытӑнманни курӑнчӗ. Юбилее хатӗрленмелли тӗплӗн шухӑшласа тунӑ плансем те ҫукпа пӗрех. Юбилейччен вӑхӑт ҫулталӑк кӑна юлчӗ. Тумалли ӗҫсем вара питех те нумай. Тухса калакансем уйрӑмах республика тӗп хулин — Шупашкарӑн сӑн-сӑпатне юсаса лайӑхлатасси пирки, хулари искусство учрежденийӗсемпе художествӑллӑ коллективсем япӑхса кайнине пӗтересси пирки нумай чарӑнса тӑчӗҫ.

Правительство комиссийӗ республикӑри наркоматсен, учрежденисемпе организацисен руководителӗсене юбилее хатӗрленес тӗлӗшпе тӗплӗ те конкретлӑ плансем тума, ҫав плансене халех пурнӑҫа кӗртме тытӑнма сӗнсе хӑварчӗ.

Республика юбилейне хатӗрленес ӗҫе районсемпе колхозсенче те, фабрикӑсемпе предприятисенче те халех пуҫарса ямалла. Ҫак ӗҫе фронтпа ҫӗршыв умӗнчи тивӗҫе пурнӑҫа кӗртессипе ҫыхӑнтарса пымалла. Халӗ республикӑри мӗнпур ӗҫҫынниисен тӑван автономи уявне хуҫалӑхпа культура тӗлӗшӗнчен ҫӗнӗрен чаплӑ ҫитӗнӳсем туса кӗтсе илес ӗмӗтпе ӗҫлемелле, орденлӑ республикӑн ятне татах та ҫӳлерех ҫӗклессишӗн тӑрӑшмалла.

Ыран ҫуракине вӗҫлемелли фронтовой вунӑкунлӑх пуҫланать

Колхозниксемпе колхозницӑсем, хӗрӳллӗнрех ӗҫлер, ҫуракине хӑвӑртрах вӗҫлер!

1944 ҪУЛХИ МАЙӐН 20-МӖШӖ ТӖЛНЕ РЕСПУБЛИКӐРИ МТС-СЕМ ТРАКТОРСЕМПЕ ҪУРКУННЕ ТУМАЛЛИ ӖҪСЕН ПЛАННЕ МӖН ЧУХЛӖ ТУЛТАРНИНЕ КӐТАРТАКАН

СВОДКА

МТС-сем	Ҫуркунне тумалли ӗҫсене ҫемҫе суха ҫине куҫарса шутласан тултарнӑ (процентпа)
Шӑхасан	118,9
Красноармейски	116,2
Ҫӗрпӳ	106,0
Йӗпреҫ	101,4
Вӑрнар	100,0
Елчӗк	100,0
Комсомольски	85,1
Тӑвай	83,2
Ишлей	82,4
Сӗнтӗр	77,4
Чкаловски	77,2
Сӗнтӗрвӑрри	76,0
Вӑрмар	75,2
Куславкка	72,4
Элӗк	67,4
Калинино	63,5
Ҫӗмӗрле	60,2
Сурмайдан	60,2
Хӗрлӗ Чутай	60,2
Канаш	57,9
Етӗрне	57,0
Первомайски	53,8
Шупашкар	47,7
Кувакино	42,4
Пӑрачкав	37,1
Кожевенски	33,8
Шӑмӑршӑ	33,0
Октябрьски	32,4
Улатӑр	31,6
Пӗтӗмпе	69,0
Майӑн 10-мӗшӗ тӗлне пулнӑ	27,3

АГИТАТОРСЕМ ХИРТЕ

ВӐРНАР. Комсомолӑн Хирпуҫӗнчи «Победа» колхозри организацинче (секретарӗ Кузнецова юлташ) 12 комсомолец. Вӗсене пурне те бригадӑсем ҫумне ҫирӗплетнӗ.

Василиса Степановӑна 5-мӗш бригада ҫумне ҫирӗплетнӗ. Вӑл сухаҫӑ пулса ӗҫлет, ҫав вӑхӑтрах агитаци ӗҫне туса пыма та ӗлкӗрет. Колхозниксене каннӑ вӑхӑтра хаҫатсем вуласа парать, калаҫусем ирттерет. Ӗҫре яланах малта пырать. Кунне 1,20 гектар сухаламалла пулсан, 1,30—1,40 гектар сухалать. Ӑна кура Григорий Михайлов, Ермолай Ранев, Зоя Спиридонова ҫамрӑксем те тухӑҫлӑн ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсен бригади ыттисенчен малта пырать.

П. Кирилловпа И. Осипов комсомолецсем сеялкӑпа акса кулленхи нормӑна 150 процента ҫити тултараҫҫӗ. Осипов юлташӑн бригадинче нормӑна тултараймап пӗр колхозник та ҫук.

Иккӗмӗшпе тӑваттӑмӗш бригадӑсем ҫумне ҫирӗплетнӗ Зоя Мироновӑпа Агафия Иванова учительницӑсем те агитаци ӗҫне тивӗҫлипе туса пыраҫҫӗ. Вӗсене час-часах уйра ӗҫлекенсем патӗнче курма пулать. Унта тухса вӗсем хаҫатсенчи статьясене вуласа параҫҫӗ, бригадӑра ӗҫ мӗнле пыни ҫинчен сӳтсе-яваҫҫӗ, боевой листоксем кӑлараҫҫӗ.

Учетчица Петрова, учительница Краснова, ветеринарнӑй фельдшер Афонин, медсестра Андреева юлташсем те хӑйсен бригадисенче начар мар ӗҫлеҫҫӗ. Колхозниксене Совет Информаци Бюровӗн пӗлтерӗвӗсемпе тӗнчери лару-тӑру ҫинчен ӑнлантарса параҫҫӗ, боевой листоксем кӑлараҫҫӗ.

Х. ЛИСИН.

КОНЮХСЕМ ТӐРӐШСА ӖҪЛЕҪҪӖ

МУРКАШ. Лашасем мӑнтӑр пулччӑр тесен, вӗсене юратса пӑхни кирлӗ. «Свобода» колхозри конюхсем Арабкина, Майорова юлташсем пӑхакан лашасем уйрӑмах мӑнтӑр. Вӗсем иккӗшӗ 18 лаша, 4 тиха пӑхаҫҫӗ.

Арабкина юлташ конюхра тӑватӑ ҫул ӗҫлет. Ҫак тӑватӑ ҫул хушшинче вӑл колхоза чылай лайӑх лашасем ӳстерсе пачӗ. Тихасене аван пӑхса ӳстерессишӗн конюхсем пӗр-пӗринпе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ.

Ҫак кунсенче колхоз председателӗ И. Петровский конюхсемпе канашлу ирттерчӗ. Лашасене епле пӑхасси, лаша апатне тирпейлӗ тыткаласси ҫинчен ӑнлантарса пачӗ. Канашлура Агриппина Арабкинӑпа З. Майорова ҫакӑн пек каларӗҫ:

—Эпир Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫитӗнӗвӗсемпе хавхаланса, пире шанса панӑ ӗҫе мӗн вӑй ҫитнӗ таран тӑрӑшса ӗҫлӗпӗр. Пире шанса панӑ ӗҫ — ответлӑ ӗҫ. Лашасем лайӑх пулсан, ҫуракине ӑнӑҫлӑн ирттерӗпӗр. Лаша ҫураки ӑнӑҫлӑхне татса паракан вӑй пулса тӑнине шута илсе, эпир малашне те пӗтӗм вӑя хурса ӗҫлӗпӗр.

Т. НИКОЛАЕВА.

Елчӗкпе Комсомольски МТС-ӗсем трактор ӗҫӗсен ҫурхи планне тултарчӗҫ

ЕЛЧӖК, майӑн 23-мӗшӗ. **(Телефонпа).** МТС ҫуркунне тракторсемпе тумалли ӗҫсен планне тултарчӗ. План тӑрӑх 5986 гектар сухаламалла, ӗнерхи кун тӗлне 6.020 гектар сухаланӑ.

Тракторсен 10-мӗш номерлӗ бригади (бригадирӗ Г. Струнков юлташ) паянхи кун тӗлне хӑйӗн планне 145 процент тултарчӗ, 310 килограмм горючи перекетлесе хӑварчӗ. Трактористка Л. Уткина, Е. Осипова, Лукиянов юлташсем ҫураки планӗсене 110—150 процента ҫити тултарчӗҫ.

А. Павлов ертсе пыракан 6-мӗш номерлӗ бригада та хӑйӗн планне 130 процент тултарчӗ, 350 килограмм горючи перекетлерӗ. Ҫак бригадӑри тракторист Ахватуллин юлташ хӑйӗн планне 238 процент тултарнӑ, ҫав вӑхӑтрах 250 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ. Тракторист Я. Албутов та плана 130 процент пурнӑҫланӑ.

В. Охотин ертсе пыракан 7-мӗш номерлӗ бригада паянхи кун тӗлне ҫуркуннехи ӗҫсен планне 137 процент тултарнӑ, 395 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ.

8-мӗш номерлӗ бригада (бригадирӗ Маркелов юлташ), тракторпа ҫураки вӑхӑтӗнче тумалли ӗҫсен планне 123 процент тултарса, 295 килограмм горючи перекетленӗ. А. Гордеевӑпа Маркелов трактористсем хӑйсен планӗсене 177 процент тултарчӗҫ.

МТС тата пысӑкрах ҫитӗнӳсем тума пултаратчӗ, анчах автол, бензин, хӑшпӗр чухне крассин вырӑнта ҫителӗклӗ пулманни ӗҫе чылай чӑрмантарчӗ. Тракторсемпе тунӑ ӗҫсем паха пулчӗҫ, анчах та уйрӑм бригадӑсен ӗҫӗнче ҫитменлӗхсем те пур. Сӑмахран, Арбузов юлташ ертсе пыракан 2-мӗш бригада малтанхи кунсенче кирлӗ пек хӑвӑртлӑхсемпе ӗҫлеймерӗ. Вӑхӑтра кӑтартусем парса пулӑшнӑ хыҫҫӑн унӑн бригади те хӑйӗн планне тултарчӗ.

Ӗҫри ҫитменлӗхсене пӗтерсе, трактористсемпе трактористкӑсен халӗ плана тултарнипе лӑпланса лармалла мар, малашне татах та тӑрӑшарах ӗҫлемелле.

Н. ВОЛКОВ,
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

* * *

КОМСОМОЛЬСКОЕ, майӑн 23-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Комсомольски машинно-тракторнӑй станци майӑн 22-мӗшӗ тӗлне планра кӑтартнӑ 3.517 гектар вырӑнне 3.520 гектар сухаланӑ, ҫапла вара тракторсемпе ҫуркунне тумалли ӗҫсен планне тултарнӑ.

Тракторсен 7-мӗш номерлӗ бригади (бригадирӗ С. Прокопьев юлташ) аван ӗҫленӗ, вӑл плана 138,2 процент тултарнӑ. В. Степанов юлташ ертсе пыракан тракторсен 5-мӗш бригади те планран ирттерсе 49 гектар сухаланӑ. Хӗрарӑмсен трактор бригади (бригадирӗ А. Ванюшина юлташ) ҫуркунне тракторсемпе тумалли ӗҫсен планне ӑнӑҫлӑн тултарнӑ.

Ҫураки планне 86 процент тултарнӑ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, майӑн 22-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Ҫуртырри сене районӗпе 8519 гектар акса ҫураки планне 86 процент ытларах тултарнӑ. 53 колхоз пӗрчӗллӗ тата пӑрҫа йышши тырӑсене акса пӗтернӗ, халӗ вӗсем ҫӗрулми, выльӑх кӑшманӗ, кантӑр акаҫҫӗ. Ӗнерхи куна районӗпе 305 гектар ҫӗрулми, 62 гектар выльӑх кӑшманӗ, 80 гектар кантӑр акнӑ.

Анчах та уйрӑм колхозсем ака ӗҫне ытла та вӑрӑма тӑсаҫҫӗ. Шупуҫри Киров ячӗпе тӑракан колхозӑн (председателӗ Н. Герасимов юлташ) тата 19 гектар сӗлӗ, 15 гектар кок-сагыз акмалла. Герасимов юлташ: — вӑрлӑх ҫитмест,—тесе ларать. Анчах та вӑрлӑх тупас пирки нимӗн те тумасть.

— Ҫӗрулми лартма ир-ха, пырса кӗме ҫук ҫӑранать,—тесе сӳпӗлтетет вӑл, ҫав вӑхӑтрах хӑй ака пуҫланнӑранпа хире тухса курман.

«Смычка» колхозӑн та тепӗр 39 гектар сӗлӗ акмалла. Колхоз председателӗ Журавлев юлташ: лашасем вӑйсӑр, час пӗтес ҫук, тет. Анчах та лашасене ура айӗнчи апатпа тӑрантарассине организацилемен. Кунта звеносене те ячӗшӗн кӑна тунӑ. Колхозниксем пур ӗҫе те ушкӑнпа ӗҫлеҫҫӗ, вӗсен ӗҫне йӗркеллӗ шута илмеҫҫӗ. Колхозӑн 15 гектар ҫӗрулми, пахча-ҫимӗҫ акмалла, анчах та вӗсен вырӑнне хатӗрлемен. Туртӑм вӑйӗ ҫителӗксӗр пулсан та, ӑвӑрсемпе усӑ курмаҫҫӗ.

Районра ака ӗҫӗ уйрӑмӑнах подсобнӑй хуҫалӑхсенче начар пырать. Райпотребсоюз пурӗ те 6 гектар сӗлӗ кӑна акнӑ. Районра 25 ялпо пур, вӗсем пӗри те акма тытӑнман. Райсоюзран нимӗнле кӑтарту та ҫук, тесе лараҫҫӗ.

С. ШАДИН.

Фермӑсем ҫумӗнчи участоксене хӑвӑртрах акмалла

Тамбов облаҫӗнчи Мичуринск районӗнчи «Заветы Ильича» колхоз ферма участокӗсене акса хӑварас тӗлӗшпе пуҫарнӑ ӗҫе Красноармейски районри колхозсем хавхаланса йышӑнчӗҫ. Нумай колхозсенче ферма участокӗсене акса хӑварнӑ та ӗнтӗ. Тӗслӗхрен, Красноармейски ялсоветӗнчи Калинин ячӗпе тӑракан колхозра 0,35 гектар выльӑх кӑшманӗ, 0,85 гектар сӗлӗ, 0,35 гектар пӑри акнӑ. Ку енӗпе фермӑри работниксем тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Ҫавӑн пекех Исаково ялсоветӗнчи «Красный пахарь» колхоз 4 гектар выльӑх кӑшманӗ, Янгас ялсоветӗнчи «Волга», Чапаев ячӗпе тӑракан колхозсенче 2-шер гектар ҫӗрулми тата выльӑх кӑшманӗ лартса хӑварнӑ.

Пур колхозсенче те ферма участокӗсене акса хӑварма тӑрӑшмалла.

З. НЕСТЕРОВА.

КАЛИНИНО, майӑн 22-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Районри колхозсен фермӑсем ҫумӗнчи участоксене пурӗ 210 гектар акмалла, паянхи куна 80 гектар кӑна акнӑ. Малта пыракан «Броневик» колхоз—6 гектар, Калинин ячӗпе тӑракан колхоз—6 гектар, «Сутталла» колхоз — 5 гектар, «Комбайн» колхоз 6 гектар акнӑ. Ҫак участоксем ҫинче пӗтӗмпех выльӑх-чӗрлӗх фермисенчи работниксем ӗҫленӗ.

Анчах та «Победа», «Ким», «Молния» колхозсем ҫак вӑхӑта ҫитсе пӗр гектар та акман.

— Ӗлкӗрӗпӗр-ха, вӑл кая юлмасть,— тесе лӑплантараҫҫӗ сав колхозсен председателӗсем.

Фермӑсем ҫумӗнчи участоксене ҫӗрулми, тымар-ҫимӗҫсем тата силослӑх культурӑсем акас ӗҫе хӑвӑртлатмалла.

Б. ШОРНИКОВ.

Махорка звенисен ӗҫне лайӑх йӗркелер

Колхозсенче махорка звенисен ӗҫне йӗркелемен пирки иртнӗ ҫул махорка питӗ начар пулчӗ. Ҫавӑнпа та хӑшпӗр колхозсем государствӑна махорка парса татаймарӗҫ.

Улатӑр районӗнчи колхозсем махорка туса илес тӗлӗшпе, чӑн та, аван ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем государствӑна планран ирттерсе махорка панӑшӑн укҫан тата кашни тонна махоркӑшӑн 1.400-шер килограмм тӗштырӑ илнӗ. Ҫак тыррӑн 50 процентне махорка туса илекенсене, ӗҫшӗн тӳлемелли йӗркe тӑрӑх, валеҫсе панӑ. Унти колхозсенчи махорка звенисенче те уйрӑм сдельщинӑпа ӗҫлеме кашни колхознике хӑйне пӗрер гектар махорка уйӑрса панӑ.

Государствӑна планран ирттерсе махорка панӑшӑн тӗштырӑ илнӗ колхозсем Йӗпреҫ районӗнче те пур. Анчах илнӗ тырӑран махорка звенисен членӗсене ӗҫшӗн пӗр колхозра та хушса тӳлемен. Ҫавӑнпа ӗнтӗ Йӗпреҫ районӗнче махорка ӗҫӗ начар пулса пырать.

Ҫакна астумалла: махорка акса тумалли плана тултармасан, государство уншӑн тӗштырӑ шыраса илме пултарать. Кунсӑр пуҫне тата махорка фронтшӑн мӗн тери паха пулса тӑнине те манмалла мар.

Пысӑк тупӑшлӑ махорка туса илес пулсан, ҫав ӗҫе вӗреннӗ ҫынсенчен ялан лӑх уйрӑм звено тумалла, вӗсене ҫӗр участокӗ ҫирӗплетсе памалла. Звено членӗсем хушшинче те ӗҫе ушкӑнӗпе пӗрле тума кирлӗ мар, вӗсене пӗрер гектар е кам мӗнчул илме пултарать (участок пысӑкӗш тата звенора миҫе ҫын тӑнине шута илсе) участок ҫирӗплетсе памалла. Вара ҫав ҫынсем махорка акса ӳстерсе, ӑна государствӑна парӑччӗнех хӑйсен участокӗнче ӗҫлеҫҫӗ. Ҫапла тусан ҫеҫ звенори кашни член лайӑх ӗҫлеме тӑрӑшать тата кам мӗнле ӗҫлесе пынине те шута илме аван пулать. Планран ирттерсе махорка туса илнӗ звено членӗсене государствӑран илнӗ тӗштырӑран тата ҫавӑн пекех преми-надбавка укҫине ҫуррине ӗҫшӗн хушса тӳлемелле. Ҫавӑн пек туни пирӗн колхозсенче пысӑк тухӑҫлӑ махорка туса илсе, фронта ытларах пулӑшма май парӗ.

Махорка акса тумалли участока 20—22 см. тарӑнӑш сухаласа сӳрелесе хӑвармалла. Ку ӗҫе ҫурхи тӗштырӑ культурисене акнӑ вӑхӑтрах туса пырас пулать.

И. ГРОМЫКО,
Агроном-махорковед.

АЙӐПЛИСЕНЕ ОТВЕТ ТЫТТАРМАЛЛА

Ишлей районӗнчи Калинин ячӗпе тӑракан колхозра ҫураки ӗҫӗсем чӑтма ҫук япӑх пыраҫҫӗ.

Ака ӗҫӗ ытла та вӑрӑма тӑсӑлни кунта, чӑн малтан, ҫуракине хатӗрленсе тухманнинчен, ҫуракине ертсе пыманнинчен тата ака ӗҫне колхозниксене мобилизацилеменнинчен килет.

Колхозра лашасем вӑйсӑр. Старши конюх М. Ягуткин юлташ лашасене йӑлтах япӑхтарса янӑ. Лаша апачӗсене тирпейлӗ тыткаламан, тӑккаланӑ, сутни те пулнӑ. Лашасене хирте ура айӗнчи апатпа тӑрантарассине организацилемен.

Колхозра хирте ӗҫлекенсем валли столовӑй ҫук. Столовӑй пулсан, ака ӗҫӗ нумай лайӑх иртнӗ пулӗччӗ. Колхозниксем хушшинче ӗҫ дисциплини ытла та начар. Майӑн 18-мӗшӗнче 7-мӗш бригадӑра ӗҫе пурӗ те икӗ ҫын ҫеҫ тухнӑ. Ытти бригадӑсенче те ӗҫ ҫавӑн пекех. Кунта уйрӑм сдельщина пирки калаҫмалли те ҫук. Кам ӑҫта ӗҫлес тет, ҫавӑнта ӗҫлет. Унтан та япӑхрах: ниҫта та ӗҫлеменнисем те пур.

Ака ӗҫӗ ҫавӑн пек япӑх пырать пулсан та, колхоз председателӗ Шорнов юлташ эрнипех ӗҫкӗре ҫӳрет.

ВКП(б) райкомӗн уполномоченнӑйӗ Григорьев юлташ ҫаксене пурне те курать, анчах колхоз активӗпе пӗрле ака ӗҫӗнче уйрӑм сдельщина организацилес, агитмассӑллӑ ӗҫе пуҫарса ярас вырӑнне, час-часах вӑхӑтне Шорнова «шыраса» е унпа пӗрле ирттерет. Кунта нимӗнле массӑллӑ ӗҫ те ҫук. Стена хаҫачӗ апрель уйӑхӗнчен вара кӑларман. Агитколлектив руководителӗ Никитина юлташ агитаторсене ертсе пымасть.

Калинин ячӗпе тӑракан колхозра МТС-ӑн икӗ тракторӗ ӗҫлемелле. Анчах пӗр тракторӗ акана тухнӑ кунах ваннӑ та уйра тутӑхса ларать, унӑн хӳттинче паян ӳсӗр Шорнов сывӑрать. Тепӗр тракторӗ те, час-часах ваннӑ пирки, йӗркеллӗ ӗҫлеймест.

Ҫак колхозра ҫураки ӗҫӗ япӑх пынишӗн колхоз председателӗпе Шорновпа райком уполномоченнӑйӗ Григорьев айӑплӑ, вӗсем ака ӗҫне колхозниксене мобилизацилемен.

Калинин ячӗпе тӑракан колхоз членӗсен ӗҫлес кӑмӑлӗ пысӑк, вӗсене ертсе пымалла. Районри организацисен ҫак колхоза халех практикӑллӑ пулӑшу памалла.

Г. ПЛАТОНОВ.

Колхоз ӗҫне пӑрахсах кил вырӑнӗсене сухалаҫҫӗ

ЙӖПРЕҪ, майӑн 22-мӗшӗ. **(Телефонпа).** «Большевик», «Красный партизан», «II-зя пятилетка» тата ыттисем те — пурӗ 8 колхоз пӗрчӗллӗ тата пӑрҫа йышши тырӑсене акса пӗтерчӗҫ.

Ҫак колхозсенче ӗҫ ӑнӑҫлӑ пыни, чӑн малтанах, унта колхозниксемпе колхозницӑсене ӗҫе мобилизацилеме пӗлнинчен килчӗ. «Большевик» колхозра ҫамрӑксемпе пӗрлех ваттисем те ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлеҫҫӗ. 64 ҫулхи Пашков тата Чугаров юлташсем кашни кунах ӗҫ нормине 140-шер процент тултарса пыраҫҫӗ.

Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозра 70 ҫулхи Андреев колхозник йывӑҫ тункатисене кӑклас тӗлӗшпе аван ӗҫлет. Вӑл тӑрӑшнипех кунта 3 гектар ҫинчи йывӑҫ тымарӗсене тасатса тырӑ акнӑ.

Анчах та «Победа», «Трудовик», «Оборона» тата «Герой» колхозсенче ака ӗҫӗ ҫаплипех вӑрӑма тӑсӑлса пырать-ха.

«Победа» колхозра 220 гектар акас вырӑнне пурӗ те 80 гектар кӑна акнӑ. Апла пулин те, колхоз председателӗ Кириллов юлташ лашасемпе ака ӗҫӗнче туллин усӑ курмасть. Колхоз тыррипе акас вырӑнне хӑйӗн кил вырӑнне сухалать. «Правда» колхоз акана тухни часах пӗр уйӑх ҫитет. Ӗҫ тухӑҫлӑхӗ кунта калама ҫук япӑх. Акана тухнӑранпа та 40 плугпа 60 гектар ҫеҫ сухаланӑ. Ку колхозра та уйри ӗҫсем пӗтиччен ех колхозниксен кил вырӑнӗсене сухалама тытӑннӑ.

П. КУРАКОВ

Колхоз витинче

КАЛИНИНО. «Трактор» колхоз ҫуракине лайӑх хатӗрленсе тухрӗ, ҫавӑнпа та ӗҫ ӑнӑҫлӑ пырать. Лашасем самӑр та вӑйлӑ. Ҫак ҫитӗнӳ пӗтӗмпех конюхсенчен килнӗ. Вӗсем лашасене юратса пӑхаҫҫӗ. Витесем таса та ҫутӑ, лашасене ака ӗҫне кайнӑ чухне пӑхса параҫҫӗ, ӗҫрен таврӑнсан та пӑхса йышӑнаҫҫӗ. Вӑхӑтра апатлантараҫҫӗ, шӑвараҫҫӗ, кашни кунах хӑрчӑкласа тасатаҫҫӗ.

Уйрӑмӑнах 3-мӗш бригадӑри конюхсем М. Аксакова тата А. Антипова юлташсем лайӑх ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем Хӗрлӗ Ҫар валли вићӗ лаша ҫитӗнтерсе пачӗҫ.

Г. НИКИФОРОВ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Куславкка комбинатĕнчи рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе награтлăсси çинчен

Производство заданийĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕшĕн Куславкка комбинатĕнчи уйрăмах палăрнă рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан çак работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградлас:

1. Семен Алексеевич **Алексеева** — медника.

2. Наталия Борисовна **Благовещенскаяна** — медника.

3. Антонина Алексеевна **Вагановăна** — ВЛКСМ Центральный Комитечĕн комсоргне.

4. Анна Павловна **Беляковăна** — токаре.

5. Владимир Васильевич **Винокурова** — слесаре.

6. Леонид Артемьевич **Винокурова** — слесаре.

7. Вениамин Генрихович **Бигдорчика** — слесаре.

8. Валентин Федорович **Володина** — главнăй инженера.

9. Сергей Алексеевич **Волкова** — цехри мастера.

10. Елизавета Яковлевна **Гусевăна** — маляра.

11. Вера Антоновна **Гризона** — мастерской начальникне.

12. Порфирий Федорович **Данилова** — финанс пайĕн начальникне.

13. Николай Федорович **Евлампьева** — слесарь-водопроводчика.

14. Раиса Георгиевна **Еремеевăна** — конструктора.

15. Екатерина Арсентьевна **Ефремовăна** — столяра.

16. Георгий Иванович **Желанкина** — мастера.

17. Владимир Фролович **Иванова** — снабжени отделĕн начальник заместительне.

18. Роман Григорьевич **Изотова** — технически отделăн начальникне.

19. Мария Григорьевна **Ильинана** — фрезеровщицăна.

20. Михаил Антонович **Казана** — цехри мастера.

21. Семен Павлович **Казакова** — цех начальникĕн заместительне.

22. Владимир Алексеевич **Калашникова** — цех начальникне.

23. Иван Васильевич **Калинина** — мастера.

24. Александр Иванович **Кондакова** — цех начальникне.

25. Михаил Семенович **Корнеева** — цехри мастера.

26. Константин Иванович **Краличкина** — группа начальникне.

27. Илья Семенович **Ланина** — главнăй механика.

28. Ольга Лавровна **Липатовăна** — ача сачĕн заведующине.

29. Леонид Иосифович **Липовецкие** — директор заместительне.

30. Надежда Алексеевна **Лысяковăна** — медицина пайĕн начальникне.

31. Лидия Александровна **Макаровăна** — копировщицăна.

32. Георгий Филиппович **Макарычева** — слесаре.

33. Павел Петрович **Марьина** — отдел начальникне.

34. Григорий Григорьевич **Мирмовича** — отдел начальникĕн заместительне.

35. Афанасий Николаевич **Морозова** — тĕрĕслекен мастера.

36. Николай Васильевич **Морскова** — медника.

37. Иван Сергеевич **Нефедова** — цех начальникне.

38. Николай Димитриевич **Никитина** — гнутарщика.

39. Александр Иванович **Ольшăна** — цех начальникне.

40. Мария Александровна **Осинăна** — склад начальникне.

41. Анфиса Максимовна **Орлевăна** — столяра.

42. Петр Гаврилович **Пруссакова** — слесаре.

43. Анатолий Павлович **Пылкина** — столяра.

44. Кирилл Семенович **Сварбова** — механика.

45. Евгений Васильевич **Смирнова** — группа руководительне.

46. Михаил Филиппович **Соколова** — инженер-технолога.

47. Леонид Иванович **Сорокина** — слесаре.

48. Валентина Сергеевна **Степановăна** — столяра.

49. Аким Яковлевич **Стрижевские.**

50. Сергей Николаевич **Селюкина** — столяра.

51. Алексей Емельянович **Терентьева** — слесаре.

52. Валентина Григорьевна **Тухлановăна** — токаре.

53. Петр Васильевич **Фатьянова** — директорăн кадрсем енĕпе ĕçлекен помощникне.

54. Леонид Павлович **Федорова.**

55. Василий Иванович **Федотова**

56. Борис Куприянович **Хитина** — цех начальникне.

57. Мария Ильинична **Храмковăна** — ача яслин заведующине.

58. Таисия Петровна **Храмковăна** — токаре.

59. Борис Константинович **Худякова** — слесаре.

60. Евдокия Петровна **Цыгановăна** — цех начальникне.

61. Георгий Иванович **Чăнулаева** — слесаре.

62. Дмитрий Кузьмич **Чăрнепова** — столяра.

63. Иван Афанасьевич **Чăрнова** — электромонтера.

64. Анатолий Петрович **Чуфистова** — цех начальникне.

65. Иван Сергеевич **Шиликова** — слесаре.

66. Юрий Иванович **Шунста.**

67. Леонид Павлович **Щекина** — группа руководительне.

68. Юрий Борисович **Эснина** — директора.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 çулхи апрелĕн 30-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Малалли. Пуçламăшĕ „Чăваш Коммуни“ 85-мĕш, 92-мĕш, 94-мĕш, 95-мĕш, 96-мĕш, 98-мĕш, 99-мĕш, 100-мĕш тата 101-мĕш номерĕсенче).

ÇĔРПУ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

3. Евдокия Алексеевна **Алексеевăна** — «Пионер» колхозăн колхозницине.

4. Григорий Андреевич **Андреева** — «Коминтерн» колхозăн апат-çимĕç бригадирне.

5. Егор Филиппович **Архипова** — Йолаш ялсовет исполкомĕн председательне.

6. Анна Степановна **Беловăна** — Тавăшкассинчи территориллĕ пуçламĕш парторганизацин секретарьне.

7. Иван Петрович **Беспалова** — машинно-тракторнăй станцин трактористне.

8. Иван Гаврилович **Гаврилова** — машинно-тракторнăй станцин трокотористне.

9. Антонина Герасимовна **Герасимовăна** «Ĕмĕт» колхозăн пăру пăхаканне.

10. Марфа Григорьевна **Григорьевăна** — «Сталино» колхозăн кок-сагыз звенин звеньевойне.

11. Марфа Григорьевна **Григорьевăна** — Сталин ячĕпе тăракан колхозăн кок-сагыз звенин звеньевойне.

12. Матвей Гордеевич **Гордеева** — «Прожектор» колхозăн сад-пахчи ăстаçине.

13. Михаил Захарович **Громова** — машинно-тракторнăй станцин комбайнерне.

14. Петр Данилович **Данилова** — «Красный герой» колхозăн председательне.

15. Феодосия Даниловна **Даниловăна** — «Пионер» колхозри пуçламĕш парторганизацин секретарьне.

16. Михаил Дмитриевич **Дмитриева** — «Боец» колхозăн пахча-çимĕç ăстаçине.

17. Никон Дмитриевич **Дмитриева** — «Чуваш ЦИК» колхозăн бригадирне.

18. Наталия Диомидовна **Елисеевăна** — Вĕрмер ялсовечĕн председательне.

19. Герасим Захарович **Захарова** — «Сталинец» колхозăн председательне.

20. Анна Ивановна **Ивановăна** — «Новая сила» колхозăн колхозницине.

21. Афанасий Иванович **Иванова** — «Красный этновец» колхозăн председательне.

22. Валентин Алексеевич **Иванова** — машинно-тракторнăй станцин комбайнерне.

23. Вера Ивановна **Ивановăна** — Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн ĕне сăваканне.

24. Екатерина Ивановна **Ивановăна** — «Можсн...р» колхозăн сурăх пăхаканне.

25. Мария Ивановна **Ивановăна** — «Огна» колхозăн сурăх пăхаканне.

26. Пелагея Ипатовна **Ипатовăна** — машинно-тракторнăй станцин трактористкине.

27. Пустинья Константиновна **Константиновăна** — «Красная Чувашия» колхозăн председательне.

28. Анисия Федоровна **Лавровăна** — опытлă зоотехника станцийĕн ĕне сăваканне.

29. Дмитрий Яковлевич **Митькова** — ВКП(б) райкомĕн пĕрремĕш секретарьне.

30. Захар Михеевич **Михеева** — «Сталинец» колхозăн ферма заведующине.

31. Павел Иванович **Орлова** — машинно-тракторнăй станцин трактористне.

32. Григорий Осипович **Осипова** — ВКП(б) райкомĕн оргинструкторски отделĕн заведующине.

33. Никодим Павлович **Павлова** — «Новая жизнь» колхозри пахча-çимĕç звенин звеньевойне.

34. Иван Кузьмич **Пидуганова** — ВКП(б) Çĕрпӳ райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ пулнăскере, халĕ ВКП(б) Ишлей райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулса ĕçлекенскере.

35. Порфирий Иванович **Плотникова** — «Чуваш ЦИК» колхозăн конюхне.

36. Ананий Игнатьевич **Романова** — «Новая жизнь» колхозăн конюхне.

37. Григорий Семенович **Семенова** — «Ĕмĕт» колхозăн бригадирне.

38. Сергей Семенович **Семенова** — райуполнаркомзаг агентне.

39. Тимофей Степанович **Степанова** — машинно-тракторнăй станцин трактор бригадин бригадирне.

ШУПАШКАР ХУЛИ ТĂРĂХ

1. Наталия Андреевна **Афанасьевăна** — Максим Горький ячĕпе тăракан колхозăн ĕне сăваканне.

2. Парасковья Платоновна **Бережнаяна** — Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн научнăй сотрудницине, ялхуçалăх наукисен кандидатне.

3. Иван Яковлевич **Бобкова** — Главнефтесбытăн Чăваш республикинчи конторин управленийĕн таварпа транспорт отделĕн старши инспекторне.

4. Семен Данилович **Данилова** — Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн инженер-землеустроительне.

5. Петр Васильевич **Козлова** — ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх отделĕн инструкторне.

6. Парфений Агеевич **Коренева** — ялхуçалăх институчĕн социализмлă ялхуçалăхне организацилес ĕç кафедрин заведующине.

7. Тимофей Андреевич **Кружилина** — ялхуçалăх институчĕн çĕрĕç кафедрин заведующине.

8. Серафим Александрович **Кузнецова** — ВКП(б) Обком секретарĕн помощникне.

9. Леонид Хрисанфович **Михайлова** — ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн секретарьне.

10. Матрена Дмитриевна **Михеевăна** — горземотдел заведующине.

11. Анастасия Моисеевна **Моисеевăна** — ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх отделĕн инструкторне.

12. Рафаил Афанасьевич **Осанова** — Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн сад çимĕçĕпе пахча-çимĕç управленийĕн начальникне.

13. Николай Аркадьевич **Пигузова** — Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн çĕрйĕркелӳ инспекторне.

14. Николай Сергеевич **Сергеева** — Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн çĕрйĕркелӳ отрячĕн начальникне.

15. Георгий Тимофеевич **Тимофеева** — ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх отделĕн инструкторне.

16. Николай Степанович **Тураева** — ялхуçалăх институчĕн ӳсен-тăрансене хӳтĕлес ĕç кафедрин заведующине.

17. Анна Федоровна **Федоровăна** — ВКП(б) Обкомĕн выльăх-чĕрлĕх отделĕн инструкторне.

ШУПАШКАР РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. Андрей Тихонович **Васина** — «Красный Флот» колхозăн председательне.

2. Иван Андреевич **Ведина** — Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Шупашкар районĕнчи уполномоченнайне.

3. Никифор Иванович **Демьянова** — Чирĕклĕ Шăмăш ялсовечĕн председательне.

4. Петр Егорович **Егорова** — «Память Ленина» колхозăн председательне.

5. Спиридон Иванович **Иванова** — «Память Ленина» колхозăн ферма заведующине.

6. Марфа Павловна **Пущаевăна** — Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн ферма заведующине.

7. Татьяна Сергеевна **Сергеевăна** — «Кормилец» колхозăн сысна пăхаканне.

8. Петр Ефимович **Шаронова** — «Правда» колхозăн ферма заведующине.

ЧКАЛОВСКИ РАЙОН ТĂРĂХ

1. Ануза Абитовна **Абитовăна** — «Маяк» колхозăн ĕне сăваканне.

2. Роман Афанасьевич **Баранова** — «Сăлтăр» колхозăн председательне.

3. Асьма Халитовна **Вахитовăна** — «Красный Октябрь» колхозăн ферма заведующине.

4. Майсарбер Хуснутдиновна **Гайнуллинăна** — «Маяк» колхозăн ферма заведующине.

5. Решида Гильмановна **Гильмановăна** — «Маяк» колхозăн колхозницине.

6. Зиганш Заргирович **Заргирова** — Нариман ячĕпе тăракан колхозăн ферма заведующине.

7. Фахризяна Зарифовна **Идрисовăна** — «Правда» колхозăн ĕне сăваканне.

8. Ольга Филипповна **Каштановăна** — Сталин ячĕпе тăракан колхозăн председательне.

9. Татьяна Анисимовна **Гудановăна** — машинно-тракторнăй станцин трактористкине.

10. Фарахутдин Ямалетдинович **Манеева** — «Звезда» колхозăн старши кĕтӳçне.

(Малалли пулать)

Шкулсенчи пĕлӳ тĕрĕслевĕ

Чăваш чĕлхине çителĕксĕр вĕрентнĕ

МУРКАШ, майăн 22-мĕшĕ. (**Телефонпа, хамăр корр.**). Районри чылай шкулсем пĕлӳ тĕрĕслевне лайăх хатĕрленсе, инструкципе тĕплĕн паллашса кĕтсе илчĕç. Шупчари туллимар вăтам шкулти ачасем тĕрĕслевĕн малтанхи кунĕпе пурте шкула пынă. Двойка палла илекен пĕр ача та çуккă.

Муркашри вăтам шкулта та пĕлӳ тĕрĕслевĕ организованно иртсе пырать. Унта учительсем вĕренӳ çулĕ тăршшĕпех тăрăшса ĕçлени курăнать. Тĕрĕслӳ вăхăтĕнче ачасем шкула йĕркеллĕ çӳреччĕр тесе, вĕри апат организацилепĕ.

Анчах, районĕпе илсен, çитменлĕхсем сахал мар-ха. Ассистентсем хăйсене çирĕплетсе панă классене йĕркеллĕ çӳременçĕ. Хăшпĕр шкулсенче тăван чĕлхене япăх вĕрентни палăрать. Сăмахран, Оринино вăтам шкулĕн 5-мĕш класĕсенче 45 ачаран Наумова учительница вĕрентнĕ чăваш чĕлхипе сурри ытла двойка паллăсем илнĕ. Шкул директорĕ Трофимов юлташ вĕрентнĕ вырăс литературипе 10-мĕш класри ачасем сочиненисене япăх çырнă. Янăшри туллимар вăтам шкулти ачасем те чăваш чĕлхипе двойка паллăсем чылай илнĕ.

Канаш районĕнче чуптару кампанийĕ начар пырать

Канаш районĕнчи колхозсенче хăмлама пултаракан 800 кĕсреçрен 100 кĕсрене кăна чуптарнă. «Красная Армия», «Мотор», Куйбышев тата Коминтерн ячĕсемпе тăракан колхозсенче 130 кĕсре, вĕсенчен пĕрне те чуптарман. Кĕсресене тата айăрсене чуптару кампанийĕ валли хатĕрлемен. Чуптару пункчĕсен заведующийĕсем чылай çĕрте хăйсен ĕçне пĕлмеççĕ.

Чуптару кампанийĕ çавăн пек япăх пыни çĕрĕç пайĕн заведующийĕ Кузьмин, главнăй зоотехник Спиридонов, зоотехник Васильева тата ветврач Петрухин юлташсем çак ĕç çине çиелтен пăхнинчен килет. Вĕсем иртнĕ çулхи йăнăшсене шута илмен.

Районри çĕрĕç пайĕн заведующийĕ Кузьмин юлташ лашасем ĕрчетес ĕçе ертсе пымасть. Партипе правительство лашасен йышне ӳстерес шырки йышăннă постановленисемпе районри специалистсене паллаштарман. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ «Выльăхсене чуптармалли мероприятисем çинчен» апрелĕн 7-мĕшĕнче йышăннă постановлени майăн 5-мĕшĕччене Кузьмин сĕтелĕнче выртнă, ăна пĕр специалист та курман.

Чуптару кампанине çакăн пек япăх ертсе пынăшăн Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Малов юлташ райçĕрĕç пайĕн заведующине **Кузьмин** юлташа хытă ятланă, çак ĕçе малашне кирлĕ пек йĕркелесе ямасан, ăна ĕçрен кăларасси çинчен асăрхаттарнă. Айăрсене вăхăтра тĕрĕслеменшĕн тата чуптару пункчĕн заведующийĕсене хатĕрлеменшĕн **Васильевăпа Петрухина** ятлаcа хăварнă.

Главнăй зоотехника Спиридонова, лашасем енĕпе ĕçлекен зоотехника Васильевăна тата ветврача Петрухин юлташа чуптару ĕçĕнчи пур çитменлĕхсене те хăвăрт пĕтерме хушнă.

Курсра пулман чуптару пункчĕн заведующийĕсене пухса халех канашлу ирттермелле, унта вĕсене чуптару техникипе паллаштармалла.

Айăрсен пахалăхне тĕрĕслемелле, вĕсене лайăххрах çитермелле тата кӳлсе çӳреме пачах чармалла.

Лашасене чуптармалли кампание ертсе пырас тата ăна лайăх ирттерес шутпа, зооветработниксене уйрăм колхозсем çумне çирĕплетмелле, вĕсем çине çак ĕçĕн пĕтĕм ответлăхне хумалла. Хăмлама пултаракан кĕсресене колхозсем, совхозсем тата государство учрежденийĕсем чуптару пункчĕсене вăхăтра илсе пыманшăн, çав хуçалăхсемпе учрежденисен руководителĕсене партипе правительствăн 1943 çулхи майăн 12-мĕшĕнче йышăннă постановленийĕ тăрăх райисполкомсен штрафламалла.

Чуптару кампанине лайăх ирттерер

Красноармейски районри Алманчă ялсоветĕнчи «12 лет Октября» колхозра 54 кĕсререн 53 тиха илсе çитентернĕ. Ку тĕлĕшпе конюх Романов юлташ тăрăшса ĕçленĕ. Вăл кашни кĕсрене сăнаса тăнă, вĕсене вăхăтра чуптарса хăварнă. Пĕтĕ кĕсресене лайăх пăхса усранă, тихисене тĕрĕс йышăнса илнĕ.

Анчах кăçал чылай колхозсенче кĕсресене чуптарса хăварас ĕç питĕ япăх пырать. Мăн Шетмĕ ялсоветĕнчи «Красная Шатьма», Тусай ялсоветĕнчи «Шимар», Красноармейски ялсоветĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхозсенче паянхи кунччене пĕр кĕсре те чуптарман.

Чуптару кампанинче иртнĕ çулта пулнă йăнăшсене кăçал тумалла мар. Иртнĕ çул Леваневский ячĕпе тăракан, «Çĕнĕ ял», «Знамя колхозника» колхозсем цĕр тиха та илмен. «Малалла» колхозра 50 кĕсререн 6 тиха çеç илнĕ.

Чуптару кампанине ирттересси пысăк ĕç. 3 çултан иртнĕ хăмлама пултаракан мĕнпур кĕсресене чуптарса хăварассишĕн тăрăшмалла.

З. РОДИОНОВА.

Ют çĕршывсенче

Президент Рузвельт США конгресне янă çыру

ВАШИНГТОН, майăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕçпăшала кивçен е арендăна парасси çинчен калакан закон тăрăх мĕн-мĕн туни çинчен Рузвельт США конгресне 15-мĕш отчет тăратнă. Ку отчет çак çулхи апрелĕн 1-мĕшне çитиччехи вăхăт хушшинче тунă ĕçсене сутатса парать. Отчетпа пĕрле Рузвельт США конгресне çыру янă. Çав çырура вăл çапла калать:

«Нацистсем оккупациленĕ Европăна пĕрлешӳллĕ нацисен вăйĕсем çĕнĕрен тата хăватлăрах пырса çапма хатĕрленеççĕ. Вĕсем нацистсене хĕвеланăç енчи, кăнтăр енчи тата хĕвелтухăç енчи базăсенчен пырса çапĕç. Сывлăшран, тинĕсрен, тип çĕр çинчен пырса çапас операцисенче нумай халăхсен боецĕсем пулĕç. Вĕсен аллинче халĕ хăватлă хĕçпăшал. Çав хĕçпăшала вĕсене пĕрлешӳллĕ нацисен пĕрлештернĕ ресурсĕсемпе вăйĕсем пама пултарчĕç. Асăннă боецсем халĕ хăйсен вăйĕсене çапăçăва кĕртме, нацистсене тата Германин вăрçă машинине çĕмĕрсе тăкас ĕçе хăватлатма хатĕр тăраççĕ».

Малалла Рузвельт: çитес операцисенче пĕрлешӳллĕ нацисен тип çĕр çинчи вăйĕсен, тинĕс çинчи тата сывлăшри вăйĕсен хăватлăн çапăçмалла пулать, тесе палăртать. унтан вăра вăл çапла çырать:

«Пĕрлешӳллĕ нацисен çапăçури туслăхĕ хĕçпăшала кивçен е арендăна памалли çинчен калакан принципа хире-хирĕç пурнăçа кĕртсе пынипе самаях çирĕпленчĕ. Хĕçпăшала кивçен е арендăна парса, эпир ытти пĕрлешӳллĕ нацисен çарĕсен кашни боецнех пирĕн пĕрлехи тăшмана татах та вăйлăнрах пырса çапма мĕн кирлине пурне те çителĕклĕх пама пултартăмăр. Хĕçпăшала кивçен е арендăна памалли принципа тĕпе хурса пĕрпĕрне туслăн пулăшнипе пула, Америка çарĕсем пирĕн союзниксенчен вĕсен мĕн пурринне, пиро кирлине илсе усă курăççĕ.

Хĕвелтухăç Европа фронтĕнче хĕçпăшал тата ытти вăрçă хатĕрĕсем, — Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Британи пĕрлештерсе тăракан халăхсем ярса тăраканскерсем. Советсен çарĕсене татах та ытларах вăй парĕç. Советсен çарĕсем те эпир пуçласа янă наступленипе пĕр вăхăтрах тăшмана çĕнĕрен пыра-пыра çапма пуçлĕç. Инçетри Хĕвелтухăçĕнче, Лăпкă океанри Çĕнĕ Гвинейăра, Бирмăра тата Лăпкă океанăн вăтам пайĕнчи японецсен çирĕплетнĕ утравĕсем çинче пыракан операцисем çакна кăтартса параççĕ: Япони çапса аркатасси нацистла Германипе çĕнтерессе кĕтсе тăмасть. Мĕн вăй çитнĕ таран эпир Китая пулăшатпăр. Пире татăклă çапăçусем кĕтсе тăраççĕ. Пирĕн Америка çарĕсемшĕн унăн флочĕпе авиацийĕшĕн, çавăн пекех тата ытти пĕрлешӳллĕ нацисен çарĕсемшĕн те халĕ нихăçанхинчен те ытларах çакă кирлĕ: пирĕн хамăрăн çапăçури юлташсене халĕ те, ку таранччехи пекех, çĕнĕ вăрçă япалисем парса тăмалла, çав япаласем вĕсене хăйсен хĕçпăшалĕ çумне вăй хушма, татах та вăйлăрах пулма пулăшаççĕ. Хĕçпăшала кивçен е арендăна памалли çинчен калакан закона Конгресс пурте пĕр саслă пулса тенĕ пекех йышăнса хăй те тепĕр хут çавнах кăтартса пачĕ. Хамăрăн мĕнпур вăйсене пурне те тĕнчери ытти ирĕклĕ халăхсен мĕнпур вăйĕсемпе пĕрлештернĕ хыççăн тин эпир оборонăран наступление куçрăмăр, поражениcем тӳссе пынине пĕтерсе, хамăр çĕнтерме пуçларăмăр. Халĕ хамăр пĕрлĕхе упраса, эпир, ним иккеленмелли те çук, татăклă çĕнтерĕве хамăр алла илетпĕр. Хамăр пĕрлĕхе вăрçă хыççăнхи вăхăтра та упраса тăрса, эпир тĕнчене лăпкă пурнăç кӳрĕпĕр, ун чухне вăрă этем ăрăвĕ ирĕк курса, пĕр хăрушлăхсăр ĕçлесе пурăнĕ».

Иден калани

ЛОНДОН майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден çамрăксен митингĕнче сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: Англи 1944-мĕш çул çак вăрçа татса паракан çулталăк пултăр тесе пĕтĕм вăя хурса тăрăшать. Англи, тенĕ вăл, вăрçă союзниксем çĕнтернипе пĕтессине çирĕп шанса тăрать. Иден каланă тăрăх, доминионсен премьер-министрĕсен нумаях пулмасть пулса иртнĕ канашлăвĕ «хăçан та пулин пулса иртнĕ çавăн пек канашлусенчен пуринчен те чаплăраххи тата пуринчен те ӳсĕмлĕреххи пулса тăрать. Çав канашлура пулнă çынсем те, канашлу пулса иртнĕ вăхăт та çавна лайăх палăртса тăраççĕ», — тенĕ.

Италири вăрçă ĕçĕсем

АЛЖИР, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ Америкăн 5-мĕш армийĕн чаçĕсем Фонди хулине (Гаэта хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре) туртса илни çинчен пĕлтерет. Çапла вара тинĕс хĕрринчи районран Формия хулипе Фонди хули хушшинчи çултан кăнтăртарахра кĕрешекен нимĕç çарĕсем пĕр çулпа кăна каялла чакма пултараççĕ. Çав Аппиева çулĕ Понтински шурлăхĕсем урлă Террачина çумĕпе иртсе каять. Итриран тухакан çулпа Фондирен тухса Пиконалла каякан çул хĕресленнĕ вырăна француз чаçĕсем атакăлаççĕ. Çак висĕкĕтеслĕхе икĕ енчен хĕсеççĕ. Паян ирхине унта нимĕçсем пĕр усăсăр çапăçнă, вĕсем хăйсен çак районри тĕп вăйĕсемпе хатĕрĕсене кăларса каясшăн пулнă.

Вăрçă обозревателĕсем çапла шутлаççĕ: союзниксен çарĕсем Гаэта, Итри тата Санта Олива хулисене илни союзниксен çарĕсен çулйĕрĕсене лайăхлатма питĕ хытă пулăшĕç. Çав çитĕнӳсем нимĕçсен лару-тăрăвне самаях йывăрлатаççĕ.

Пико хулине туртса илсен, союзниксем нимĕç çарĕсене икке уйăраççĕ. Ку вара «Гитлер линийĕн» системине пĕтĕмĕшпех йĕркерен кăларса ярать.

ЛОНДОН, майăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: союзниксен çарĕсем çаплах «Гитлер линине» туртса илессишĕн хаяррăн çапăçаççĕ. Англин 8-мĕш армийĕн çарĕсене хирĕç тăшман хăйĕн фрончĕн пĕтĕм талккăшĕпех вăйлăн хирĕç тăрать.

Фронтăн тинĕс хĕрринчи участокĕнче Америка çарĕсем Монте-Сан Бьаджона туртса илнĕ (Фонди хулинчен хĕвеланăçнерехре).

АЛЖИР, майăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Юлашки хыпарсем тăрăх, Америка çарĕсен малти чаçĕсем Террачина патне çитнĕ (Гаэта заливĕн çыранĕнче). Тăшман вăйлăн хирĕç тăрса çапăçайман.

Кассино хулинчен хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем Понтекорво тулашне çитнĕ те Лири шывĕн улăхĕнче «Гитлер линийĕн» оборони ăшне татах шалалла кĕрсе кайнă. Пикопа Понтекорво хушшинчи çула татнă.

Союзниксен авиацийĕ тăшман çарĕсем пухăнса тăнă вырăнсене тата унăн вăрçă объекчĕсене хаяррăн пыра-пыра çапнă.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, майăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çанталăк хуп-хура пĕлĕтлĕ тăнине пула Францие Бельги çыранĕсенче нимĕн те курăнман пулин те, майăн 21-мĕшĕнче кунĕпех союзниксен самолечĕсем Ла-Манш урлă вĕçĕмсĕр вĕçе-вĕçе кайнă. Вĕсем Çурçĕр Францири чугун çул объекчĕсемпе нимĕçсен аэродромĕсем çине бомбăсем тăкнă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах американецсен авиацийĕ нимĕçсен Па-де-Кале районĕнчи тата Çурçĕр-Хĕвеланăç, Вăтам тата Хĕвелтухăç Германин нумай районĕсенчи вăрçă объекчĕсене атакăланă.

Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: самолет çинчен ӳкерсе илнĕ фотоӳкерчĕксем кăтартнă тăрăх, Англин авиацийĕ апрелĕн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Эссен хули çине бомбăсем пăрахнă чухне Крупп завочĕсем сурри яхăн сиенленнĕ. Пысăк çуртсем пурте сиенленнĕ.

Майăн 22-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин бомбардировочнăй авиацийĕн самолечĕсем Дуисбург хулине хаяррăн тапăннă. Дуисбург вăл Рейнпа Рур шывĕсем пĕрлешнĕ вырăнта ларать, вăл Германи çулйĕрĕсен пысăк центрĕ пулса тăрать. Çавăн пекех тата Ганноверти объектсемпе (Германи) Бельгири аэродром çине бомбăсем пăрахнă.

Çак операцирен хăйсен базисене акăлчансен 30 самолет каялла таврăнман.

США-н ВИЦЕ-ПРЕЗИДЕНЧĔ УОЛЛЕС КИТАЯ КАЙНИ

ВАШИНГТОН, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Президент Рузвельт çапла пĕлтернĕ: США-н вице-президенчĕ Генри Уоллес Китая кайрĕ, тенĕ.

НИМĔÇСЕМ СЛОВАКИЕ ОККУПАЦИЛЕМЕ ПУÇЛАНĂ

ЖЕНЕВА, майăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцарецсен «Журналь де Женев» ятлă хаçачĕ çапла пĕлтерет: нимĕçсем Словакие оккупацилеме пуçлаççĕ. Словакире пур шкулсене те хупнă. Шкул çурчĕсене Германи çарĕсен аллине панă. Хаçат çакна палла туса çырать: Словаки Квислингĕ — Тисо тата квислингла «правительствăн» хăшпĕр «министрĕсем» нумаях пулмасть Гитлер ставкине кайни Словаки çĕршывне Германи çарĕсем оккупацилессипе çыхăнса тăрать. «Журналь де Женев» çырнă тăрăх, нимĕçсен Венгрири çарĕсен пĕр пайĕ, чикĕ урлă каçса, Словакие кĕрсе кайнă та ĕнтĕ.

Хаçатра çырнă тăрăх, словаксем нумайăшĕ хăйсен тăван çĕршывĕнчен тараççĕ, тусем çинче пытанса пурăнаççĕ, Хĕрлĕ Çар енче кĕрешекен Чехословаки чаçĕсем патне çитсе кĕме тăрăшаççĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ **А. А. ЭСХЕЛЬ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

ЛТ 00144 Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.